Иванов К.В. Сăпка юрри; Шăрăх; Кĕркунне; Выçă аптăранăскерсем; Хальхи самана; Чĕкеç : [сăвăсем] / К.В. Иванов // Сунтал. – 1940. - № 6. – С.10-12.

# К. В. ИВАНОВ СĂВВИСЕМ

## СĂПКА ЮРРИ

Çывăр, ачам, çывăрах,
Ыйху тутлă пултăрах.
Сана пăхма килнĕччĕ
Амăрт-кайăк, çил, хĕвел.
Амăрт вĕçрĕ килнелле;
Хĕвел анчĕ ту айне;
Виçĕ кăçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.
Çилрен ыйтать амăшĕ:
Ăçта, ачам, çÿрерĕн?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и
Е хумсене çапрăн и?
— Тинĕс хумне çапмарăм,
Çăлтăрсене тивмерĕм,
Эпĕ ача сыхларăм,
Ун сăпкине сиктерĕм.

## ЮРĂ

*(Кольцовран)*

Сивĕ çил вĕрет,
Хаяр çил вĕрет;
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.
Курăнмасть унта
Çутă кун çутти,
Курăнмасть унта
Çут хĕвел çутти.

Сĕм-тĕттĕм çĕрте
Тĕтресем витĕр
Хура каç анчах
Хуралса тăрать.
Çакăн пек вăхăт,
Çак усал вăхăт
Пĕр-пĕччен çынна
Чĕрине хĕсет.

* * *

*(Кольцовран)*

Тÿпене хĕвел
Улăхса çитнĕ,
Пĕçертет, хĕртет
Тĕнчене хĕвел.
Пăчă сар хĕре,
Хирте хуйхăллă
Пуçлă ыраша
Вырасси килмест.
Хĕрсе çитнĕ хир
Çунтарать ăна;
Шурă пичĕ те
Хĕвелпе çунать.
Хулпуççи çинчен
Пуçĕ усăнать,
Çурли те ÿкет
Аллинчен унăн.



„Нарспи“. Поэт ӳкернӗ картина.

★ ★ ★

## ВЫҪӐ ЮРӐ

*(Некрасовран)*

Хресчен тӑрать—
Тайкаланать.
Хресчен пырать,
Сывлаймасть те.
Ҫӑкӑр хытти
Пӗрсе янӑ,
Хуйхи-суйхи
Халран янӑ,
Хура пичӗ
Кӗленче пек.
Ӳсӗр ҫын та
Ун пек пулмӗ.

Пырать, хашкать,
Хӑй ҫывӑрать,
Кӗҫке ҫитрӗ
Ыраш патне.
Тунката пек
Тӑчӗ те вӑл,
Юрлать сассӑр
Хӑй юррине:
Ҫитӗн, ҫитӗн,
Эй, ырашӑм,
Эпӗ санӑн
Панкрат хуҫу...

* * *

*(Некрасовран)*

Хресчен ҫынни хӗрсессӗн,
Ӗне пекех ӗнерсӗр:
Пуҫне кирлӗ-кирлӗ мар
Пӗрер шухӑш кӗрсессӗн,
Савӑл лартса ҫапсан та,
Тукмакпа та тухас ҫук.

1907 08 ҫул.

## ШӐРӐХ

Пӗр пӗлӗт ҫук, хӗвел ҫунать,
Кӑвак пӗлӗт ялтӑрать.
Пӑчӑ сывлӑш вӗри тӑрать,
Чечек ӗнсе сарӑхать;
Ыраш ани типсе кайнӑ,
Пуҫахӗ ун саралнӑ;
Пирӗн ҫырман шывӗ чакнӑ,
Пирӗн арман лӑпланнӑ.

## КӖРКУННЕ

Шӑнтать ӗнтӗ кунсерен,
Ҫитрӗ ӗнтӗ кӗркунне:
Вӗҫен-кайӑк сассинчен
Хуйхӑ кӗрет чӗрене.
Карти-карти кайӑксем
Вӗҫет тинӗс леш енне.
Тӑхӑннӑ, ав, йывӑҫсем
Пурте сарӑ тумтирне.
Хӗвел кулать сайрарах,
Шӑрши пӗтнӗ чечексен.
Йӗрсе ярӗ, ак, часах
Сивӗ хаяр хӗл ҫитсен.



„Нарспи тӗлӗкӗ“. Поэт ӳкернӗ картина.

★ ★ ★

## ВЫҪӐ АПТӐРАНИСЕМ

*(Халлап)*

Пурӑнаттӑн пит аван,
Эс кӗтменччӗ выҫ куна.
Анчах, тӑванӑм, паян
Апат лекни ҫӑварна?
Ларса хырӑм тӑранмасть,
Мӗнле шухӑш шухӑшлан?
Ӗҫ шырарӑн—тупӑнмасть,
Ӑҫта каяс тен паян.
Илӗп ҫӗҫӗ-пурттӑма,
Чӗнӗп пӗрер юлташа,
Кайӑп юта, вӑрлама...
Ан асӑнӑр чӑваша.

—

Иван пичче пӳртӗнче
Выҫӑ ларнӑ виҫӗ кун,
Анкӑ-минкӗ пуҫӗнче
Ҫапла шухӑш пулнӑ кун:
„Тата пӑртак ларсанах
Апат килсе тухӗ.ак...“
Ак, тамаша! Ҫавӑнтах
Вӗҫрӗ кӗчӗ пӗр курак.
Леш, выҫӑскер, куракне
Пӑхса-туса тӑмарӗ;
Мӗнле апат иккенне
Авантарах пӑхмарӗ.
— Апат килчӗ, терӗ те,
Ячӗ илчӗ ҫавӑнтах...
Курак пуҫӗ пӗтрӗ те,
Курак пиҫрӗ вутсӑрах.

—

Ҫӳлте пӗлӗт кӑн-кӑвак,
Ура айӗ—шурӑ юр.
Хирте ҫӳрет выҫ тукмак—
Унӑн пурӑнӑҫ—хӗнхур.
Ҫӳрет тукмак кӑнтӑрла,
Ҫӳрет тукмак ҫӗрӗпе,
Пырса кӗрет ялалла—
Ҫын хӑвалать йыттипе.
Анчах апат тупӑнмасть,
Унӑн выҫӑ вилмелле...
Тукмак ӳкнӗ, хускалмасть,
Пӑхрӗ вилӗм килнелле.
(Пӗтерчӗ те юмахне)
Ватти хушрӗ сӑмахне:
Ҫапла, ачам, выҫӑхсан—
Ҫын тухать ҫав ухмаха.
Хӑшӗ ҫиме пулмасан
Тухать вара хураха,
Хӑшӗ ухмах Иван пек
Курак ҫиет аташса,
Хӑшӗ сӑрӑ тукмак пек
Вилсе каять, выҫӑхса.

Декабрӗн 30-мӗшӗ. 1907 ҫ.

★ ★ ★



„Тӑхтаман“. Поэт ӳкернӗ картина.

# ХАЛЬХИ САМАНА

*(1908-мӗш ҫулхи октябрӗн 28-мӗшне)*

Ачаш кӑна ачам пур,
Пӗртте хӑпа пӗлмерӗ.
Апат ҫисе ларнӑ чух
Аран ҫилӗ килмерӗ.
Ҫыру пӗлме, ҫын пулма
Ялти шкула яр-ха, тет.
Ҫыру пӗлни мӗн тума
Кирлӗ ҫынна, атте? тет.
Ачам, ачам, ан йӗтет,
Илтес кунта ху илтӗн.
Хут вӗреннин уссине
Хут вӗренсен ху пӗлӗн.
Ҫитес ҫула ҫитсессӗн,
Пӑртак ӑс-пуҫ кӗрсессӗн,
Парӑп акӑ сана та
Ялти шкула ӑс пухма.

Турӑ хушсан, ҫын пулсан
Курӑн Чӗмпӗр хулине.
Ӗнтӗ, ачам, самана
Ӗлӗкхи мар кучуне.
Ӗлӗкчӗ вӑл, ӗлӗкчӗ,
Урӑх тӗслӗ ӗмӗрччӗ.
Тырӑ-пулӑ пит пулнӑ,
Тырӑ акма ҫӗр пулнӑ.
Ӗмӗр иртнӗ ӗҫ ҫинче,
Ӗҫ иртсессӗн ӗҫкӗре,
Анчах тӗрлӗ хуйхӑ та
Пайтах пулнӑ-ҫке тата.
Тухатмӑш та тухатать,
Юмӑҫӗ те хӑратать,
Асамҫӑсем асаҫҫӗ.
Ача-пӑчана пӑсаҫҫӗ.
Вырӑссем те вӗсене,
Ырӑ сунса, вӗрентме
Ачисене илеҫҫӗ,
Ашшамӑшне йӗртеҫҫӗ.
Тарӑхтарать таркӑн та,
Вӑрхурах та вӑрманта.
Тӗрлӗ усал-тӗселрен,
Тӗрлӗ усал чирсенчен
Чӳк кулленех тумалла,
Путек-сурӑх пусмалла,
Куллен-кунах чӳк туни—
Хӗл-ҫӑвӗпех хӗн курни.
Киреметре кӗлли пур,
Хӑяматра хывни пур,
Кӗлтуса та килӗшмест,
Киремет те итлемест,
Турӑсем те чӳксене
Илми пулчӗҫ кучуне.
Кунҫул пӑсӑлса кайрӗ,
Куҫ-пуҫ аташса кайрӗ:
Те тутара тухас-ха,
Те юталла тарас-ха,
Анчах ыр ҫын тупӑнчӗ
Самани те улшӑнчӗ.
Урӑх ҫулпа утрӑмӑр,
Урӑх ҫӗре тухрӑмӑр,
Кунсӑр пуҫне чӑвашсем
Мӗн пулӗччӗҫ халиччен?
Тутаралла тухӗччӗҫ,
Тутар тӗнне тытӑччӗҫ,
Е вырӑса ерӗччӗҫ,
Пӗрерӗнех пӗтӗччӗҫ.
Ырӑ чӑваш тупӑнчӗ,
Ырӑ ӗҫе тытӑнчӗ.
Чӑн чӑвашла сӑмахпа
Хӑй тӑванне чӑваша
Пырса ҫапрӗ чӗрине,
Пӑлхатса ячӗ чӗрене.
Пӑлхатнинчен питӗрех
Ҫӗнӗ ӗмӗр мар-и ҫав?
Шухӑш ӳкрӗ пуҫ ҫине.
Ҫӗнӗ ӗмӗр мар-и ҫав?
Ҫӗнӗ пурнӑҫ кайрӗ ҫав!
Пур ҫӗрте те ялсенче,
Хура халӑх хушшинче
Хут вӗренме тытӑнчӗҫ,
Шкулсем нумай уҫӑлчӗҫ.
Вӗсен чӗри Чӗмпӗрте,
Аслӑ чӑваш шкулӗнче.
Кӗнекесем ҫаптарчӗҫ,
Ҫын хушшине салатрӗҫ;
Кӗҫке ӗнтӗ куҫӗсем
Уҫӑлаҫҫӗ чӑвашсен.
Кӗҫке курма пуҫларӗҫ,
Тӗнче кура пуҫларӗҫ.
Ҫав ӗҫсене кам турӗ,
Ҫак таранччен тӑрӑшрӗ?
Ҫак таранччен тарӑхса,
Чӑвашсемшӗн тӑрӑшса
Кун-ҫулӗнче курнине,
Шухӑшпала шурнине
Кам каласа парӗ-ши?
Кам ырӑ ят сарӗ-ши?

Эй, самана, самана!
Мӗн кӑтартӑн малалла?
Хальхи кунсем капла-ха,
Килес кунсем мӗнле-ши?
Пурӑнатпӑр хуллен ҫеҫ
Аслӑ ҫынсен ӑсӗпе.
Вӗсем пире юратса
Хӑй шухӑшне хӑварса
Халӑх ӗҫне тӑваҫҫӗ,
Халӑх хуйхипе ҫунаҫҫӗ.
Ырӑ ҫынсем ыйтнине,
Кирек кама кирлине
Ялан пӗлсе тӑраҫҫӗ,
Юратайса тӑваҫҫӗ.
Анчах чӑваш хушшинче
Чунӗ хытнӑ ҫынсем те
Тапаланма пуҫларӗҫ,
Тӑрса ҫапла каларӗҫ:
Чаплӑ вырӑн тупасчӗ,
Часрах улпут пуласчӗ.
Тӗрлӗ ҫутӑ тӳмешӗн
Тӗнки тухать ав лешӗн;
Чӑвашла та калаҫмасть,
Тӑванне те астумасть:
Чӗри шӑнса кайнӑ ҫав,
Чӗрӗ виле пулнӑ ҫав.

Ҫитменнине ҫын ҫине
Ҫитмен пурнӑҫ ҫитрӗ ҫав.
Йывӑр кунсем килтӗҫӗ,
Выҫлӑх ҫулсем ҫитрӗҫӗ.
Ҫӗрӗ тӑвӑр, тыр ӳсмест,
Тӑранма та ҫитеймест.
(Выҫӑ ҫӑвар выҫлӑхне
Кил-картине кӗрсенех
Турчӑкапа тухас та,
Сухалӗ ҫине сурас та,
Хӑваласах кӑларас,
Хапхаранах ӑсата .)
Чӑтаҫҫӗ-ха чӑвашсем,
Вӗҫнех ҫитмен ха вӗсем.
Ӗҫкӗ-ҫикӗ тунӑ чух,
Ӗҫсе-ҫисе ларнӑ чух,
Юррисене юрлаҫҫӗ,
Куҫҫулӗпе кулаҫҫӗ.
Чӑваш! Сана ун чухне,
Чуну ҫӗкленнӗ чухне,
Мӗн пит асна килет-ши?
Мӗн пит чунна хӗсет ши?
Савӑнӑҫ-и, куҫҫуль-и
Сан куҫӑнта куҫ тулли?

# ЧӖКЕҪ

Чӗкеҫ-чӗкеҫ, чӗкеҫӗ,
Пӗртте канма пӗлмерӗ:
Кунӗпе вӗҫсе ҫӳрерӗ,
Улӑм пӗрчи пуҫтарчӗ,
Тӑмпа шӑлса ҫыпӑҫтарчӗ.
Хӑйне йӑва ҫавӑрчӗ,
Ҫӑмарта тума тытӑнчӗ;
Ҫӑмартасем турӗ те,
Йӑви ҫинчен анмасть те—
Чӗп тухасса кӗтет вӑл.
Акӑ, чӗпӗ кӑларчӗ:
Чӗпписем чӑйлатаҫҫӗ,
Ҫиме апат ыйтаҫҫӗ.
Чӗкеҫ-чӗкеҫ, чӗкеҫӗ,
Кунӗпе вӗҫсе ҫӳрет вӑл,
Пӗртте канма пӗлмест вӑл:
Шӑна-пӑван пуҫтарать,
Чӗпписене тӑрантать.